Пётём тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ҫĕнтĕрĕн 24 шăматкун 221 (5034) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш ҫул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаҫачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĕ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—87, ред. заместительĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăҫ пайĕн—6—85, йăлкуҫлăх пайĕн—4 — 57, советсем пайĕн—0—88, промышленнăҫ пайĕн—7—87, йăлкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйăн — 6—23.

Чăваш парторганизацин XIX-мĕш конференцийĕ

Пайан ПСК(б)П Чăваш организацин Обльăҫри XIX-мĕш конференцийĕ ҫĕлеме тытăнать.

ПСК(б)П Чăваш организацин 18-мĕш конференцийĕ пулнăранпа ҫулталăк та виҫĕ уйăх иртрĕ. Вăхăт нумайăх мар пулсан та, ҫак тапхăр хушшинче пĕтĕм Совет Союзĕнче пирĕн парти пурнăҫĕнче те, Чăваш республикĕнче Чăваш парторганизаци пурнăҫĕнче те пысăк событисем пулса иртрĕҫ. Ҫак тапхăр хушшинче пирĕн асăлă совет ҫĕршывĕпе пĕрле Чăваш республикĕ те, ПСК(б)П Ленинла—Сталинла Тĕп Комитечĕ, Чăваш парторганизаци йĕртсе пынине, социализмăпа демократи сăмăн ҫĕнĕ пуҫламăш хăнăрчĕ. Тĕнчери чи демократиллĕ Сталинла Конституци тăрăх ССРС, РСФСР, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă. Коммунистсемпе партире тăнăнисен блокĕ историлĕ ҫĕнтĕрӳсем турĕ. Верховнăй Советсен суйлăвĕсем Чăваш республикинчи халăхсен политикăлă-морăллĕ пĕрлĕхĕ ҫирĕп пулнине, парторганизацийĕпе массă тавҫăн сыхăнса тăнине кăтартрĕ.

Ҫак вăхăт хушшинче парторганизаци тавра нумай йышлă ҫĕнĕ активь ӳссе ҫитĕнчĕ. Партире тăракан тата партире тăнăн сыснене пиншĕрĕн государствăн йĕртсе пыракан ĕҫне хутшăнтарнă.

Халăх тăнăнăсем—троцкистсемпе бухаринщăсем, буржуалă националистсем сăтăр туса пычĕҫ пуҫлан та, Чăваш республикĕ партин обльăҫри 19-мĕш конференцине хуҫалăхпа культура строительствине пысăк ҫитĕнӳсем тунипе ҫитрĕ.

Ҫак иртнĕ вăхăт хушшинче Чăваш парторганизаци ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1937 ҫулти февраль-мартри пленум решенисемне тата ҫак пленумра партин ҫулпуҫĕ Сталин йăлтăш кăтартса панисемпе хĕҫпăлланса, тĕрĕмеяек ПСК(б)П Тĕпкомĕ йĕртсе пынине, контрреволюцилĕ троцкисла-бухаринла, буржуалă националла ҫпионсен йăвисене сĕмĕрсе тăкас, партине государствă аппаратне двурушниксемпе предательсенчен тасатас ĕнĕпе пысăк ĕҫсем туса иртерĕҫ.

Халăхăн ирсĕр тăшманĕсем, тăван ҫĕршыва сутакăн предательсем — Петровсен, Спасăвсен тата ытти ҫав бандисем Чăваш республикинчи партипе совет, хуҫалăхпа культура организацине уттăлах майлă семпе йĕртсе пыракан вырăнсене йышăнса, чĕре майсемпе ĕҫлесе социализмăн строительствине сахал мар сийĕн кӳнĕ.

Ҫак тăшмансене партин обльăҫри 18-мĕш конференцинче те тупса палăртăнман. Вĕсем, тăшмансем, критикăпа самокритикăна путарипе, суйса, уталаса инĕпитлесе-ҫеленипе кăна мĕн йăлашки вăхăтсене ҫитичченех партире тытăнса йăлма пултарнă. Ҫакăн пек пулнă ПСК(б)П Обком руководствинче халăх тăшманĕ Петров тата двурушник Иванов пулнăран кăна пулма пултарнă.

Тăшмансене тупса палăртасси, вĕсене тĕрĕ шыв ҫине кăларасси парторганизаци айăлтан хĕсинче пулса пынă. Анчах та, парторганизацинче Обком секретарĕ пулнă Иванов айăлтан тухакан критикăна хĕссе суд ҫине, тăшмансене пур майсемпе те хӳтлес, вĕсене ответлă вырăнсене аврăпа пырас суд ҫине тăнипе, политанса йăлнă тăшмансем мĕн йăлашки вăхăтсене ҫитичченех партире тытăнса йăлма пултарнă. Ҫакăн пек пулни ПСК(б)П Обком руководствинче халăх тăшманĕ Петров тата двурушник Иванов пулнăран кăна пулма пултарнă.

Тăшмансене тупса палăртасси, вĕсене тĕрĕ шыв ҫине кăларасси парторганизаци айăлтан хĕсинче пулса пынă. Анчах та, парторганизацинче Обком секретарĕ пулнă Иванов айăлтан тухакан критикăна хĕссе суд ҫине, тăшмансене пур майсемпе те хӳтлес, вĕсене ответлă вырăнсене аврăпа пырас суд ҫине тăнипе, политанса йăлнă тăшмансем мĕн йăлашки вăхăтсене ҫитичченех партире тытăнса йăлма пултарнă. Ҫакăн пек,

Парти пурнăçĕ

Парти докуменчĕсем çине ответсăр пăхассине пĕтерес пулаť

Парти докуменчĕсене тĕрĕслене тата улăштарнă хыççăн, пирĕн парти хуçалăхĕ йĕркене кĕчĕ.

Парти есĕнче тен вырăнта тăраканнисенчен пĕри вăл—парти хуçалăхне йĕркеле тытса тарасси пулаť. Коммуниссене учота илесси тата парти докуменчĕсене лайăх пăхса усрасси партилĕ организацине есĕн уйăрални пайне. Пирĕн Чăваш парторганизацинче парти хуçалăхне йĕркелес ĕçре пысăк ĕçсем тунă пулсан та, ситменлĕхсем те сахал мар-ха. Районсенчи парторганизацине йĕртсе пыракан хăшпĕр йăлтащсем коммуниссене учота илес, Обкома отчот тăратас, парти докуменчĕсене тĕрес йĕркелес ĕçсене техничĕски ĕç вырăнне çеç хураççĕ. Çак ĕç питĕ ответла пулнине анланмаççĕ. Парти докуменчĕсем çине çакăн пек ответсăр пăхнине пула, ПСК(б)П райкомĕсенче парти хуçалăхне тирпейлеп тытканине куратпăр.

ПСК(б)П Патăрьел райкомĕнче парти докуменчĕсене сырса тултарас ĕç çине çийелтен пăхнине пула, 1937 çулти декабрĕртен пуçласа 1938 çулти май уйăхне çитичченех икĕ комплект пăсса пĕтернĕ. Çак ĕçе райком çĕкретарĕ пулнă, халĕ Çĕрĕç Халăх Комиссăрĕн заместительĕнче ĕçлекен В. Чернов тунă. Парти райкомĕн çĕнĕ çĕкретарĕ Вишньов йăлтащ та парти докуменчĕсем тăрах Обкома пĕр отчот та тăратман.

Партин Елĕк райкомĕ 1938 çулти январь уйăхĕнчен пуçласа çентăбер уйăхне çитичченех коммуниссене 38 документ панă, çав шутран сакăрĕшне пăсна. Партин Шупашкар хула комитетĕнче те ĕççем çакăн пекех. Хула комитече çентăберĕн 20-мĕш тĕлне 97 документ панă пулсан, 12 комплектне пăсса пĕтернĕ.

Парти докуменчĕсене йĕркеленĕ чухне пăсса пĕтерни вăл парторганизацисен руководительĕсем парти членĕшĕн тата кандидатшĕн питĕ кирлĕ документ çине çийелтен пăхнă пирки пулаť. Райком çĕкретарĕсем парти Тепкомĕ парти докуменчĕсене мĕнле йĕркелемели çинчен панă инструкцине вуламаççĕ. Парти докуменчĕсене йĕркелес ĕç питĕ ответлă, ун çине çийелтен пăхма йăрамаст.

Парти докуменчĕсене лайăх сыхласа усрани коммунисăн сăнапатне, унăн дисциплинине кăтартса паракан тĕслĕхсенчен пĕри пулаť. Парти документĕсене хăклакан, революцине сыхлăх çинчен маншăн коммунис хăйне пана документа лайăх сыхласа усрать. Анчах та пирĕн парторганизацире парти докуменчĕ çине нимĕн ответсăр пăхăнсем те сахал мар-ха. Парти документчĕсене улăштарнă хыççăн, пирĕн Чăваш парторганизацинче 126 коммунис парти документчĕсене сухатнă. Документа сухатнисен хисепĕ Шупашкар хула организацинче (26 документ), Улатăр районĕнчи организацинче (13 документ), Çемĕрле районĕнчи организацинче (10 документ) тата Иетĕрне районĕнчи организацинче (9 документ) нумайрах. Çак организацисенче коммуниссене парти документчĕсене лайăх сыхласа усрасси çинчен анлантарса парасси çитĕлĕкĕсĕр тăрать. Парти райкомĕсемпе хула комитечĕ пуçламĕш организацисенче парти хуçалăхне тата партин кашни членĕпе кандидатпа пана документа çирĕп сыхласа усрасси çинчен тĕплĕн анлантарса пана пулсан, çакнашкал йĕркесĕр ĕçсем пулас çук.

Çакна партин Шăнкартăм, Трак, Турхан районĕсенчи организацисен ĕçĕнчен лайăх курма пулаť. Çав организацисенче парти документчĕсене улăштарнă хыççăн, парти документĕне сухатнă тĕслĕх пĕрре те пулман.

Çапла ĕнтĕ, пирĕн парторганизацинче парти хуçалăхне йĕркеле тăрас ĕçре пысăк ситменлĕхсем пур. Çаксăнпăн парти Обкомĕн парторгăнсене йертсе пыракан пайне, унăн заведующинче Полтев йăлтащ та вăйлать. Полтев йăлтащ хăй Обкомра ĕçлеме тытăннăран вара пĕр районти организацире те пулман. Полтев йăлтащан тăвансем тĕлĕшенчен те таса марлăхсем пур.

Семенав.

Актив пухăвĕ

КАНАШ, çентăберĕн 22-мĕшĕ. (Телефон тăрăх). Пайан партин районри активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ПСК(б)П райком çекретарĕ Белорусăн йăлташ Шупашкар хула организацин V-мĕш конференцине ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн VII-мĕш пленумĕн решенисем çинчен доклад туса пачĕ.

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн VII-мĕш пленумĕ Обкомăн перремĕш çекретарне Иванова политикăй ĕнчен шанчăксăр-ăн вырăнне хурса ĕçрен тата Обком членĕсен составĕнчен кăларса, унăн партилĕхĕ çинчен тăракан ыйтăва ПСК(б)П Тепкомĕ çуменчи Парти Контроль Комиссине памала тунине пуху ырларĕ.

Пухура 12 çын тухса каларĕ. Тухса калакансем, Шупашкар хула организацин конференцийĕпе ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн VII-мĕш пленумĕ хула комитечĕпе Обкомăн çитменлĕхĕсене тăрă шыв çине болăшевикла кăларса тăратнине палăртрĕç.

Тăшмансен сăтăрăн ĕçĕсен йăлашкисене пĕтересси Канаш районĕнче те йăнăх пырать-ха. Весене хăвăртрах пĕтересспне пур коммунисен, комсомолецсен тата партире тăман болăшевиксен те вирлĕн кĕрешмелле.

Районра йăлхуçалăх ĕçĕсем те кайа йăлса пыраççĕ. Государствăна тыра парас плана 81 процент, натурплата 40 процент, киверен нивле тырра тавăрассине 8 процент тултарнă.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунсула тавассине те çитменлĕхсем пумай.

Актив пухăвĕ Шупашкар хула организацин конференцийĕн тата ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн VII-мĕш пленумĕн решенисене пур пуçламĕш организацинче те сӳтсе-явма сенсе хăварчĕ.

Умра тăракан ĕçсене малала йăма, йăлсоветсене тата колхозсене пулăшма парти райкомĕ йăлсене актив йăчĕ.

Смирнов.

Йăлсовет суйлавçăсен наказĕсене пурнăçламаť

Чăрăшкассинчи суйлавçăсем (Йĕпреç р.) 1936 çулта йăлсоветне чылай наказсем парса хăварнăччĕ. Унтанпа икĕ çул иртрĕ ĕнтĕ. Анчах йăлсовечĕ суйлавçăсем парса хăварнă наказсене çителĕксĕр пурнăçлаť.

„Йăлсовет сумĕнчи çекцисен ĕçне аваплатмала, весен руководительĕсенчен кашни уйăхрах пĕр хут отчотсем итлемеле",—тенĕ наказра. Пурĕ 11 çекци. Йăлсовет председателĕ Васильйев йăлтащ йĕртсе пыманнине пула, пĕр çекци те ĕçлемест. 1938 çулта çекци руководительĕсене пухса пĕр хут та канашлу туса иртермен. Кулĕ тăрă çекцийĕпе йăлхуçалăх çекцин руководительĕсем йăлтан кайни çулталăк иртнĕ пулсан та весем вырăнне çĕнĕ руководительсем суйласа лартман. Васильйев йăлташ çекцисен руководительĕсене те пĕлмĕст.

Йăлта политикăлă тата культурăлă-массăлă ĕçе вăйлатса ĕçас, вулав çурчĕн ĕçне ĕçкерекле, 1938 çулта хутшăлмелĕпе, трахома пĕтĕмпех пĕтерес, государствăй умĕнчи парăмсене вăхăтра пурнăçласа пырас, тырпул тухăçне хăнăртас телĕшпе çĕр ĕçеначе агрономи ĕçĕсене пурнăçласа пырас,—тенĕ наказра. Анчах наказра кăтартнисем чылаййăшĕ пурнăçа кĕрсе пымаççĕ.

Вулав çурчĕ ĕçлемест, унăн пуçлăхĕ те çук. Хут сахал пĕлекен 51 çынна халĕ те вĕрентĕве йăвăçтарман. Трахом чирĕнчен сывалса çитменнисем 18 процента çитеççĕ.

Государствăна умĕнчи обязательствăсене те начар пурнăçласçĕ. Тĕштăрă тăратас плана 78 процент, 3-мĕш квартăлта аш-какай тăратмали плана 70 процент, уксăс-тенкĕ пухас плана 29 процент çеç тултарнă.

Кĕпĕрсем, вулав çурчĕ, шкул вăлăн вутă сарăйĕ тата икĕ гектар çинче кăтартулă сат тумала,—тенĕ наказра. Çаксенчен пĕр ĕçне те пурнăçа кĕртмен.

Суйлавçăсем парса хăварнă наказа мĕнле пурнăçласа пыни çинчен виçĕ уйăхра пĕрре отчот тата ревизи туса иртермелле пулнă, Весене те пурнăçламан. Кăçал пуре те 3 хутчен пленум, икĕ аслă пуху анчах иртрĕ. Ревизи пĕрре те пулман. В. Вишневский

Аттестаци итогĕсем

1937 ç. февралĕн 11-мĕшĕчен пирĕн республика тарăх пуçламĕш шкулсемпе тулли мар вăтам тата вăтам шкулсенче ĕçлекен 5655 учительпе аттестаци витĕр мĕн пурĕ те 987 çын çеç тухнă (17,4 процент). 1938 çулхи июлĕн 1-мĕш тĕлне пуçламĕш, туллимар вăтам тата вăтам шкулсенче ĕçлекен 6061 учительпе 5502 çынна аттестаци витĕр каларна (88 процент). Çакăнтан ĕнтĕ Чăваш республикĕ аттестаци ĕçĕн вĕçленле çитсе пынă пек курăнаť. Çавах та мĕнпе килне-ĕçа аттестаци ĕçне пайăнхи кунченех тăсса пыни? Калас пулаť, Чăваш АССР Çутеç Халăх Комиссариачĕ аттестаци комиссийĕсене çителекле организацилеменнинчен килне. Çака тĕп сăлтав пулса тарать. Паллах ĕнтĕ, иртне вереннă çулĕ хыççăнхи икĕ уйăхра (июлĕпе август) аттестаци комиссийĕ хăйĕн ĕçне малала туса пыраççине чарса лартмала пулнă. Мĕншĕн тесен, учителсен пысăк ĕç хыççăн кăну вăхăчĕ пуçланнă. Весенчен нумайăшне заочнăй ĕççисенче тата ыти çерте те пулна. Çапла вара аттестаци ĕçне партине правительства кăтартнă вăхăта—1938 çулхи августан 1-мĕш тĕлне пурнăçлама май килмен.

Аттестаци витĕр тухнă учителсенчен 2841 çынан весем хăйсен менле классемпе ĕçленине кура педагогика училищăна ĕç учителсен институчĕпе пединститут курсне вĕренсе испытани тытмала. 555 учителе педагогика ĕçенче ĕçлеме хатĕр марринне кура, ку ĕçрен вуçех хăтарна. 278 учителе пелӳлех çителекĕсĕр пулна пирки кĕçĕн классенче ĕçлемелле туна. Çака вăл учителсен педагогикăлă квалификацине тата весен политикăлă-идеăла пелӳне хăпартас ĕç çителекĕсĕр пулса пынине катартса парать.

Партире правительства учителсене педучилищăчă программине государствăна испытанйеем тытма 1940 çуллинех, педагогикăлă тата учителсен институчĕсем курсне вĕренсе петерсе государствăла испытани тытиа 1941 çуллинех вăхăт пана. Çутеç Халăх Комиссариачĕпе районти çутеç организацисем весем вăрăм вĕренме çителекле условисем туса парассишĕн, весен квалификацине куллен-кунах хăпартса пырассишĕн тарашас пулаť.

Çутеç Халăх Комиссариачĕпе халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен институтăн, педучилищăсăсен ĕçĕсене тата учителсене заочнă вĕрентес ĕçе тепченех ланахлатмала. Халăх вăтам пелӳ илессишĕн пысăкăн еметленнине пуранăçа кĕртес тесен, чи малтанах тĕплĕн пелекен кадрсем çителекле кирлĕ. Ку кадрсене хатĕрлеме пирĕн пур условисем те çителекле.

Аттестаци комиссийĕсенĕн материалĕсем тарăх шкулсемпе учителсен ĕçĕсенче çаknашкал ситменлĕхсем пурри паларчĕ: учителсем хушшинче ПСК(б)П историне вĕренмели кружоксем тата ыти кружоксем те питĕ йăпах ĕçленĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ, пирĕн шкулсенче вĕренӳпе воспитани ĕçне çителекле организацилеймен, кунсăр пуçне чылай учителсем налти тата улăпи общественникпа, унăн куллен хи çыхăнса тăмаççĕ.

Аттестаци комиссийĕсен решенийĕсем тарăх Чăваш АССР Çутеç Халăх Комиссариатне мен пуре 239 апелӳлеци пана. Весене пуре те пăхса тухнă. 70 апелӳлеци тарăх аттестаци комиссийĕ решенийĕсене улăштарса 43 çынна кăйăлах педагогикала ĕçре ĕçлеме, 19 çынна педагогика ĕçне вăхăтăйăх хăварнă, 8 çынна пуçламăш классенче ĕçлеме права пана.

Пĕтĕмпе илсен пайăнхи куна аттестаци комиссийĕ витĕр тухна 5502 учител ĕçне пăхса тухса ку материалсене татăклăн çирĕплетме РСФСР Çутеç Халăх Комиссариатне тата РСФСР Çутеç Халăх Комиссариачĕпе 2112 материала çирĕплетес каналă панă.

Çентăберен 20-мĕш тĕлне Чăваш АССР Çутеç Халăх Комиссариачĕ 667 учителе аттестацисем пана.

Пирĕн республикăра тĕрле сăлтавсемпе аттестаци комиссийĕсенче пулмасăр тата 708 учител йăлташ. Çентăберен 15-мешенчен пуçласа аттестаци комиссийĕсем ĕçлеме тытăнчĕ. Комиссине пулмасар йăлнисен аттестаци комиссийĕсенче çентăберĕн 15-мĕшĕпе ноябрĕн 15-мешенчи вăхăтсенче пурнăн те пулмала. Çак икĕ уйăх хушшинче республикăри учителсене пурнăе те аттестаци комиссийĕсем витĕр кăларас ĕçе пĕтĕмпех пурнăçа кĕртесси пысăк та ответла ĕç.

Пирĕн республикăри 2841 учителĕн хăйсен квалификацине куран-кун хăпартса пырса, заочнă вĕренес ĕçе чан-чăнах болăшевикла организацилесе, 1941 çулхи августан 1-мĕш тĕлне персонăлăй звани илме тивĕçле пулмала. Кузадачăна пурнăçлассăн тĕрес çуле—çутеç организем учителсен квалификацине ӳстерес ĕçе оперативла йертсе пыни пулаť.

И. Сапожникав.

ПСК(б)П райкомĕ отчотпа суйлав пухăвĕсен решенийĕсене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслет

Нумайăх пулмасăр, ПСК(б)П Москворецки райкомĕ отчотпа суйлав пухăвĕсенче парткомсем ĕçне çителĕксĕр тесе йышăннă парткомсен членĕсен канашлуне пухнă.

Пуçламăш парторганизацисенчен чылайăшĕсем хăйсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене ăнăçлан тӳрлетсе пыраççĕ.

Райком парткомсен çекретарĕсене парти организацисен пухăвĕсене туса иртерме хушнă, вăл пухусенче отчотпа суйлав пухăвĕсен решенийĕсене пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен отчотсем туса памалă хушнă.

(ТАСС).

Йăлти пуçламăш парторганизаци ПСК(б)П историне вĕренме хатĕрленет

Тутар АССР Республикăнчи Нурлат районĕнчи парторганизаци ПСК(б)П историне вĕренме хатĕрленест. 30 кружок туса хатĕрленĕ. Пропагандăсем хатĕрлеме икĕ семинар тунă—пĕрне вырăс чĕлхипе, тепринне—тутар чĕлхипе. Халăх вăхăтра районри партăкабинет тата колхозсенчи пилĕк партăкабинет ПСК(б)П историйĕн уйрăм сыпăкĕсене илӳçтрацилеме материалсем пухаççĕ, консультацисем иртереççĕ.

(ТАСС).

Сĕнĕр çар округĕнчи Н чăсĕнче

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Бойецсем каннă вăхăтра. Сылтăмра çар ĕçне тата политикăна вĕренес ĕçри отличник, агитколлектив членĕ А. Г. Овчинников.

Павлăв фото-ӳкерчĕкĕ (Совфото).

Сывлăха сыхлас ĕçе йертсе пымала

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи сывлăха сыхлав пайĕ трахпункчĕсене тивĕçлипе йертсе пымаст. Ку икĕ мĕнрен лайăх курăнаť: Хăмăркаври трахçестра ĕçрен пăрахса каймалăх икĕ уйăх ытла ĕнтĕ. Вăл кайнăранпа трахпункт хупă тăрать. Анчах сывлăха сыхлав пайĕ пайăнхи куннчен те трахработник тупса памаст.

Çавăн пекех 1-мĕш Хурашапри трахпунктра ĕçлекен Петрова та трахомпа кĕрешесси çинчен манса сăкăнă. Вăл чылайранпа куна пурăнат пулсан та трахомран пĕр сыпăка та сыватаймăн. Ача çуратмали çурт та çăрапа питĕрĕнсе тăрать.

Сывлăха сыхлав пай пуçлăхĕн Макарăв йултăшăн халăх сывлăхне сыхлас ĕçе кабинетра ларса мар, кирлĕ пек ĕçертсе пыма тăрăшмала.

Е. Самарин.

Марксисăм-ленинисăмăн никам çĕнтерейми вăйĕ

Пайан „Правда" хаçатра Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (болăшевиксен) Парти Историн XII-мĕш сыпăкĕ тата закăлучени пичетленисе тухаççĕ. Ăна та чапла ăслăлăхпа ĕçе вĕçлесе çитерне, парти аллине унăн Тĕп Комитечĕ, унăн çулпуçĕ „Сталин йăлташ калама çук вăйлă теорилĕ хĕçпăлах панă. Çак ăслăлăхпа ĕçре Ленин—Сталин партин нумай çулталăкăн хушшинче мухтавлă историлĕ çулĕпĕре тата опытне пĕтĕмпех çырса хунă.

Пирĕн парти рабочи класс пуçĕне тăрса пит йăвăр условисенче вуншар çул хушши капиталисмăла стройăа çавăрса çапăçишĕн, çывăха çын эксплоатацинине пĕтересситĕн, социализмăшăн кĕрешнĕ. Кĕрешнĕ те çĕнтернĕ! Çĕр чăмăрĕн улттăмĕш пайĕнче социализăм çĕнтерчĕ, ĕнтĕ 1936 çултах Сталинăн Конституци „пĕтĕм тĕнчине историлĕ факта—ССР Союзĕ ăталанăвĕн çĕнĕ тапăрĕне, социализăмăн общăстăлă строительствине вĕлессишĕн тата майпенех коммунисăмăн общăстăна куçмăн тапхăрĕ кĕнине çирĕплетесе хучĕ,—унта—коммунисăмăлă общăстăвара—общăстăлă пурнăçăн вĕркисенче йертсе пырăканни: „кашнинчен—унăн пултарулăхне кура, кашнине—ăна кирлине кура", тенĕ коммунизма принципи пулмала".

ПСК(б)П Истори пайăн пичетлесе кăларакан XII-мĕш сыпăкĕнче 1925-1937 çулсем çинчен, болăшевиксен партийĕ социализмăла общăстăвăна ирĕклĕх парса, çавăнпа пĕрле унăн пурлăхлă пурнăçне тата культурăлă положенине чăнлăнпех лайăхлатайманран пĕтне. Весен тĕп хăвăлакăнăçĕ çавăнта пулнă. Пирĕн революци ыттисемĕн пур революцисенчен çакăнпа уйăрăлса тăрать: вăл халăха цивилизацран, капиталисмăран ирĕке кăларчĕ çеç мар, тата унăн пурлăхлă пурнăçĕпе культурăлă положенине тĕпренех лайăхлатрĕ. Çакăнта унăн вăйĕ тата никам çĕнтерейменлĕкĕ".

ПСК(б)П Истори XII-мĕш сыпăкĕнче ССР Союзĕн Сталинла Конституцинне—çĕнтерӳ тунă социализăмăн тата революцине хресченсен демократин Конституцинĕ, тесе хăк панă, çак Сталинла Конституцине социализăм çĕнтернин пĕтĕм асăлăхне, социализăмла революци çĕршывра тунă улшăнусен пĕтĕм тарăнлине,—çĕршывăн экономикинче, халăхăн класлă составĕнче, ĕçсăнниссен пуянăçĕнче, ăслиниче, культурăлă вилçиниче пулнă улшăнусене—çавсене пурне те суттăн палăртса хунă.

Пирĕн çĕршыври социализăмăн пит пысăк çĕнтерĕвĕсем тата çăкăна уйăрăмах чаплă: вăл çĕнтерӳсене 1929—1933 çулсенче капиталисмăлă çĕршывсене йăрса илнĕ тата 1937 çулăн икĕмĕш çурçулĕнче калăх сикнĕ тухнă кăлăна çук хăйăр экономикăна кризис вăхăтĕнче тунă. Кризиса пуля империализмăлă çĕршывсем хушшинче хирĕçлĕхсем çиевлесе кайнă. Агрессорăла çĕршывсем—Германи, Японии, Итали—кризиса пула хăйсем çухатнисене иттăн сахăрах хӳтĕлеине çĕршывсенчен туртса илнине сапласшăн. Гибралтартан пуçласа Шанхайа çитиченхи пит пысăк талăкăшпа вăрçа вучăхĕсем темиçе те пулса тăнă. Итали Абиссиннине туртса илни, Италине Германин Испанири интервенцийĕ, Германи фашисĕсем Австрийĕ тытса илни, Чехословакине фашисăм хăратни—çаксем пурте „демократилĕ" державăсен капиталисăла интересĕсене сапни, агрессăрăем çав державăсене сийĕн кӳрсе тĕнче çинĕрен пайласшăн, хуçăлан-мали вырăнсене тытса илесшĕн.

Шăпăн, темле сисмен çĕртен, халăхсем империализмăла иккĕмĕш вăрçа шуса кĕчĕç, çав вăрçă ĕнтĕ çĕр чăмăрĕ çинчи çур мĕлăрăн çынна мăтла çăварса илнĕ.

Хăлăхсем патне „сисмен çĕртен" ăшшăнса пынă вăрçа ССР Союзĕшĕн те пысăк хăрушлăх пулмасăр тăма пултарăймест. Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн çĕршыв, йăланах мир политикине тытса пырса, хăмăрăн чикĕсен оборонă тĕрекленĕ, Хĕрлĕ Çăран тата Хĕрлĕ Флотăн кӳрешӳ хатĕрлĕхне çирĕплетме мĕн кирлисене пурне те турĕ.

ССР Союзĕнче социализăм йăнăçсем туса пыни фашисмăн усăралан та усăл агенчĕсене—буржуазин троцкисла бандитсене, çав ретем шайĕнче кайăшăсене штăрах та штăрах тăрăхтарнă, вĕсем Октябрĕрти Социализăмла революцин пурнăйăн куншĕсенчен пуçласах Ленинăн хирĕç, партийĕ хирĕç, совет государственине хирĕç заговăрта пулнă, пур çулсенче те партине совет влăçне хирĕç тăнăçăвăрем, провокацисем тунă, партине пра-вительствăн руководительĕсене тискеррĕн вĕлересснне хатĕрленĕ, сăтăрлана, диверсисем тунă. ПСК(б)П Историн XII-мĕш сыпăкĕ бухаринла-троцкисла шпионсен, сăтăрăсен, тăван çĕршыва пăрахăнă изменниксен йăлашкисене пĕтерни çинчен каласа парать.

„Çав шургăвардине пигмейсем, вĕсен вăйĕ пурĕ те пĕр пĕр ним мар кăпшанка вăйĕне çеç таналшаť тесе шутлама пулнă пулĕччĕ, хăйсене—вăйăшăн—çĕршывăн хуçисем, тесе шутлană пулмала тата вĕсене хăйсем чăнахах та Украинăна, Белоруссине, Приморйене айăкка валеçсе пама тата сутма пултарнă пек туйăнна.

Çав шургвардиле кăпшанкăсем совет çĕршывĕн хуçи совет халăхĕ пуласа тăнине, а çав господасем—пукăвсем, бухаринсем, зиновьевсем, каменевсем мĕн пурĕ те вăхăтăйăх государствă служăнине тăракансем çеç пулнине, вăл вĕсене, кирлĕ мар çӳпе-çапă шутласа, хăйĕн канцелярийĕсенчен кирек хăш минутра та кăларса ывăтма пултарнине манса кайнă.

Фашиссен çав ниме тăман лаккăйĕсем совет халăхĕ пĕрре пӳрнине хускатсанах вĕсенчен йĕрĕ те йулас çукки манса кайнă.

Совет çучĕ бухаринла-троцкисла ирсĕрсене пĕрсе пăрахмала турĕ. Шăлти ĕçсен Халăх Комиссариачĕ пригăвăра пурнăçа кĕртрĕ.

Совет халăхĕ бухаринла-троцкисла бандăна ăркатма тăкнине ырларĕ те черетри ĕçсене тума тытăнчĕ.

Черетри ĕçсем вĕçем ССР Союзĕн Верховнăй Советĕн суйлавне хатĕрленесси, вĕсене организацилас ӳкерчĕксем пулна".

ССР Союзĕн Верховнăй Советĕн суйлавĕсем Ленин-Сталин партийĕн чапăларан та чаплă çĕнтерĕвĕ пулчĕç. Суйлавсенче коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блокĕ чаплă çĕнтерӳ турĕ, суйлавсем большевиксен партийĕ пĕтĕм халăхăна ун çирĕп сыхăнса тăнине, совет халăхĕн моральпе-политикăлă пĕрлăхĕн тата совет халăхне социализăмăн çĕнтерĕвĕпе патне йăлсе çитернĕ Ленин—Сталин партин йăвăра пĕтĕссе тăнăн асăлă вăйне катартса пачĕç.

Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (болăшевиксен) Партин историйĕн „Закăлучени" тенĕ пайра болăшевиксен партин утса тухнă историлĕ мухтавлă çулăн тĕп итогĕсене кăласа парать. Кунта ПСК(б)П историйĕ мĕн вĕрентнине кăтартса панă, болăшевикла руководствăна никам çĕнтерейменни сăлтавĕсеннепе условийĕсене марксизла сутăн та кĕскен ăнлантарнă, кунта Ленин—Сталин партин историлĕ пĕтĕм асăлăхне ăнлансă илмĕн çăрауçине панă. „Закăлучени", пурнăçăн малтан, пролетариатăн революцилле партийĕн, çĕнĕ сăнарлă, марксизла-ленинла, одпортунизăмран маркăлĕ, пролетариата буржуазине татăклăн тытăма хатĕрлентерме тата пролетари революцийĕпе çĕнтерессине организацилеме пултаракан партин, асăлă роль кăтартса парать.

ССР Союзĕнче болăшевиксен партийĕ çавăн пек партин пулса тăрать.

Октябрĕрта Социализмăлă Асăреволюци Российăри рабочи класс пуçĕнче чăн-чăнах çывăх пек парти-болăшевиксен парти, ăна Ленин

ССРСойузĕн
Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

Йĕтĕн тылласа сӳс тăвассине организацилесси тата ĕçшĕн тӳлесси çинчен

СССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачен йĕтĕн тылласа сӳс тăвас ĕç пирки панă кăтартуне çирĕплетнĕ. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ колхозсене çав катартуна усă курма сенет.

Колхозсенчи йĕтĕне тылласа сӳс тăвакан машинăсен нормине кашни уйăрам сурт йĕ номĕр йĕнĕне сăнамала тыллаза пăхна тăрăх тăваççĕ. Колхозра йĕтене алăпа тыллаççĕ пулсан, алăпа ĕçлекенсем вăлăн те нормăсем тăваççĕ. Тылла пуçси çинче ĕçлемели нормăна килограм-номĕрпе палăртмала.

Йĕтен тыллămали нормăна йĕтĕн тыллăмали машинă мĕн чухлĕ типтĕмĕ йĕтĕн тыллама пултарни тарăх палăртаççĕ. Начар тыллана йĕтене йышăнмаççĕ, тепĕр хут тыллама кăйăла тăвăрса параççĕ. Тепĕр хут тылланăшан ĕçкуне памала мар. Йĕтен çурăмсене типетмели нормă типетмĕн йĕтĕн вăçи тата çурăм хисепĕ тăрăх пулмала.

Йĕтене Антонăв йăлтащ çистемиле машинă агрегачене тыллана чухне машинне, горстă евшчик, тылламан йĕтĕн илсе параканскем, транспорторган илсе тăраканскем йăланах ĕçлесе тăраканскем пулмала.

СССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ ĕçшен тӳлес ĕçре çакан пек йĕркене пăхăнма хушать: йĕтене сушилкăра типтĕмĕ чухне правилăсене пăхăнса, нормăна тултарнăшан 2,4 ĕçкунĕ памала.

Антонăв йăлтащ çистемилĕ машинăпа йĕтĕн тыллана чухне машинăна 3 ĕçкуне, йĕтен турттарса пыракана тата тыллана хыççăн йулакан кайăшсене пуçтаракана 2-шер ĕçкуне, йĕтĕн парса тăракана, транспортортан йĕтĕн илсе тăракана, йĕтен силлекенсене, сурттаракансене тата йĕтĕн сӳсне турттаракансене 2,5-шер ĕçкунĕ шутласа памала.

Ĕçе учота илсе пыма лайăх пултăр тесе тата вăрăм сӳс мĕн чухлĕ тухнине пĕлме, йĕтене алапа тыллакансене, ку ĕçе пуçăнучăсем, йĕтене 5-шер килограмăн виçсе памала. Тыллăнă хыççăн кашни 5 килограм йĕтене уйрăмăн сыхмала.

Тыллана чухнĕ нормăна ытлашшинех тултарсан, ытлашши тултарнă пайĕшĕн, сӳс пахалăхĕ лайăх пулсан, вара пĕре çурă ытларах шутласа ĕçкунĕ параççĕ.

18-мĕш номĕртен пуçласа 24-мĕш номĕре çитичченех йĕтĕн тунăшăн пĕре çурă ытларах, 24-мĕш номĕртен малăла тунă йĕтĕншĕн, нормăна мĕн чухлĕ тултарнине пахăмасĕрах икĕ хут ытларах ĕçкунĕ памала.

Автомашинсем туйăнчĕç

Тăвăй районĕнчи чылай колхозсем: Шмидт ячĕпе тăракан колхоз, Амалăх, Кĕрше, Вăрманçăрни колхозĕсем государствăна 32-шер центнĕр какай сутса автомашинăсем туйăнчĕç. В. Илйин.

Пирвайхи заповĕде манма йурамасҫ

Государствăна тырпул тăратассине натурплатă тырринне парса тăтасси—кашни колхозăн пирвайхи заповĕче пулса тăрать. Çакна республикăри малта пыракан колхозсем тӳррĕн тата лайăх пахалăхла тырă парса пурнăçлареç.

Районри партипе совет организацисен çав малта пыракан колхозĕсен пăха примерĕсемпе усă курса, кайа пулса пыракан пур колхозсемпе йăлсене, хаçсен обиазателствисене пурнăçлама мобилизацилемеле пулна. Анчах, вăл пулмарĕ-ха. Çавна пула республикăри чылай районсем государствăна умĕнчи пирвайхи заповĕде пурнăçлас тĕлĕшпе кайа йулнă. Çĕнтабĕрĕн 20-мĕшне пирĕн республика государствăна тырпул тăратассине 88,7 процент, натурплатă тырринне тӳлессине 54,4 процент çеç тултарна.

Пайăнхи куна тырпул тăратас обиазателствăна Улатар, Шамăрша тата Çĕмĕрле районĕсем пĕтемпех пурнăçлареç пулсан, Канаш (78,5 процент), Хĕрле Чутай (79,4 процент), Турхан (74,7 процент), Çĕрпу (73,1 процент) районĕсем чатма çук йулса пырăççĕ. Ку районсенче обиазателства тарах государствăна тырпул тăратассине натурплатă тырри тӳлессипе тата государствăран кивçен илнĕ тырпула тавăрса парассипе таччăн сыхăнтăрса пымаççĕ. Çака вăл пите сийенле, ун пек практиканă халех тен тумала.

Тырпул хатĕрлевĕ, ытти ĕçсенчи пекех, масса хушшинче политикăла-массăла тата организатăрла ĕçе сарлакан туса пыма ыйтать. Çакăн урла ентĕ колхозла массăна государствăна умĕнчи, социализăма таван çĕршыв умĕнчи пирвайхи заповĕде тӳррĕн, пĕр чăмăр мавсăр пурнăçлама мобилизацилемеле.

Районри организацисен руководителĕсем районра тырпул хатĕрленĕве мĕнле пынине кулленех тĕрĕслесе тăмала, час-часах выраннисенче пулса колхозсемпе ĕедиполичниксен хуçалăхĕсене хăнсен уменчи обиазателствисене вăхатра пурнăçлама пулăшмала. Анчах, çав пулăшу халех выраннисенче куранмаст-ха. Пайăнхи куна ĕедиполичниксен хуçалăхĕсем колхозсенчен темиçе хут кайа йулна. Çĕнтабĕрĕн 20-мешне Шупашкар районĕнчи колхозсем тырпул хатĕрлев обиазателствине 93,6 процент пурнăçлама пулсан, ĕедиполичниксен хуçалăхĕсем пурĕ те 70,7 процент çеç тултарнă. Иртнĕ пилеккунăхра Шупашкар, Ишлей, Тутаркас, Шанкартам районесенчи ĕедиполичниксен хуçалăхĕсем государствăна пĕр центнĕр та тыра паман. Çаканпа районри руководителсем те килĕшсе ларнă, вĕсем ĕедиполичниксен хуçалăхĕсене хăйсен обиазателствисене вăхатра пурнăçлатарас пирки сахал ĕçлеççĕ.

Тырпул хатĕрлев ĕçенче халиччен пулса пĕна чăмăрлă ĕçсем текех пулмала мар. Вырăнсенчи партипе совет организацийĕсен, хатĕрлев органĕсен тата партире тараканнисемпе партире таман боль шевиксен пурин те государства умĕнчи пирвайхи заповеде хаварт пурнăçлассишен кĕрешĕве хальхинчен темиçе хут вăйлатмала. Тырпул хатĕрлев планне епĕр мĕнчуç хаварт тата анăçлăн вĕçлетпĕр, çавăнчул хамăран таван çĕршыва хаварăрах тереклетме, хамăран пурнаçа чечеклетме пулăштатăр.

Йĕтĕнпе кантăр вăйлă пулнă

Мартынкассинчи (Трак р.) „Хĕрлĕ хĕвелтухăç" колхозра кăçал йĕтĕн-кантăр тăвассипе йăтăрласа ӳкăрна оригадă ĕçлерĕ. Бригадăри 24 колхозниçă, 13 колхозник пулнă, 5 гектар çинче йĕтен, 20 гектар çинче кантăр акса тунă. Йĕтенне кантăра уйран пуçтарса кĕнĕ. Вĕсене пултарса тылласа сӳс тума тытанна. Вăтам шутпа гектартан 7 центнĕр йĕтен вăрри, 10 центнĕр сӳс, 8 центнĕр кантăр вăрри тухна.

Колхоз государствăна йĕтĕн, кантăр парса татрĕ. Йулашкине колхозниксене ĕçкуйĕсем тăрăх валеçсе параççĕ, колхоз вăлăн пайăвсем йăвма уйăрса хăварăççе.

А. Иванов.

Ĕçкунĕ çине 4-шар тенкĕ укçа

ÇĔРПУ. Рындинăри „Çĕнĕ пурнăç" колхоз Сталин йăлтащ çулсерен 7—8 мĕлйăрд пат тĕштырă туса илмеле, тесе панă лозунга анăçлăн пурнăçа кертсе пыраç. Колхозри бригадăсем агротехникăлă ĕçсене тĕрĕс тата вăхăтра туса пынине вăйлă тырпул туса илчĕç. Колхоз вăтам шутпа гектартан 150 пат тĕштыра, Г. Романăв колхозник йĕртсе пыракан стахановла звено 5 гектар участкă çинче кашни гектартан 200 пăт кĕркри тулă туса илнĕ. Çак звено вăтам шутпа гектартан 180 пăт ыраш, 3 гектар участкă çинче кашни гектартан 240 пăт çурхи тулă пуçтарса кĕнĕ. Романăв йĕртсе пыракан звено вăйлă тырпул туса илес ĕçре хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ, хăйĕн сăмахне йăлăлан пурнăçларĕ.

„Çĕнĕ пурнăç" колхоз август уйăхĕнче вăйăн çапса пĕтерсе, государствăна тата МТС на тырпулта тыррисене парса татнă. Çавнашкалах государствăна сӳс-кантăр памали плана та тултарнă.

Кĕркри ĕçсем колхозра лайăх пулса пыраççĕ. 98 гектар çинче кĕркри çĕртме туса, плана тултарнă. 150 тонна çилос хывмала пулнă, пайăнхи кун тăлăк 120 тонна хывнă.

Хваçки вăхăтра тупăна ĕçкунĕсем тăрăх валеçме хатĕрленеççĕ, колхозниксене аванс шучĕне тĕштырă тата укçан параççĕ. Кăçал ĕçкунĕ тăрăх 9-шар килограм тĕштырă, 4-шар тенкĕ укçа валеçсе пама палăртнă. Хаçлă колхозниксене ĕçкуйĕсем тăрăх аванспа 3-шер килограм тĕштырă, 2-шер тенкĕ укçа валеçсе панă.

Колхозниксем кăçал пысăк тупăш илеççĕ. Акă, В. Демахин колхозник семйăн 700 ĕçкуне тунă. Çав семйе кăçал 2.800 тенкĕ укçа, 378 пăт ытларах тырă илет.

В. Дмитрийĕв.

Вырăнти пуйанлăхсемпе усă курасси

Çĕмĕрлери екстракт-завăкан „Боль шевик" савăт кашни çулах екстракт кăларма 200 пин кубла метра вăхăн йуман вăйăç пĕтерет. Çак вăйăç хисепĕнчен 6 процентĕ çеç екстракт пулса тăрать, ытти вара отхода тухать. Ана одубинă тесçĕ.

Çапла вара савăтра кашни çулленех отход нумай пулать. Ку тăранччен савăт вăл отходна çурăмлă вырăнсене усă курна.

Анчах йĕпе отхода вутă вырăнне çынтăрни усала-ши? Литературăра катартна тăрăх, 60 процент нӳрлĕх, черелех тытакан одубина 1.350 калории парать. Çакан пек сахал калорине вутăна çынтăрни çителĕкле тăран вăй нумай пултарăймаст. Вал ака çак тĕслĕхрен те аван куранат: „Боль шевик" савăтран енергине пăс вăйĕ илсе тăракан комбинат хеллехи уйăхсенче çителĕклĕ пăс пулман пирки йĕркелен ĕçлемест.

Техника йĕнчен те тата практикăра та çакна палăртна: одубина хакла йышши товар—картон тунăма çав тери паха чĕртăвар пулса тарать.

Мелекессри екстракт савăтĕнче иккĕмĕш çул ĕнтĕ одубинăран картон тавакан цех ĕçлет. Пĕр тонна картон тума 2.153 тонна одубина кирлĕ. Çакна шута илсен „Боль шевик" савăтра, екстракт кăларна хыççăн йулна одубинăна уса курсан, çулталăкне 65—70 пин тонна картон туса каларма пулать. Çапла вара, одубинăран картон тăвакан пысăк хăпрак-лартма йурать. „Боль шевик" савăтри пăспа вай станцине йĕркеле ĕçлеттерсен вал çене хăпрака электроенергипе ытлашшипех парса тăма пултарать.

Одубинăна картон тăвас çĕрте уса курма тытансан савăтри пăспа вай станци вăлăн вута âçтан тупас ыйту тухса тăрать. Ку ыйтава татса пама та пирĕн условинче майсем пур. Савăт котельнине торфпа ĕçлемеле тăвасси.

Çĕмĕрле станцинчен инçех мар торфпа шурлăксем пур. Весенчен пĕри—Çĕмĕрле станцинчен кăнтăр хĕвелтухăнеле 4 километрта, „Шупашкар—Çĕмĕрле" тракторлă шоссе тăвакан „Боль шевик" савăт кашни çулах екстракт кăларма 200 пин кубла метра вăхăн йуман вăйăç пĕтерет. Çак вăйăç хисепĕнчен 6 процентĕ çеç екстракт пулса тăрать, ытти вара отхода тухать. Ана одубинă тесçĕ.

Çапла вара савăтра кашни çулленех отход нумай пулать. Ку тăранччен савăт вăл отходна çурăмлă вырăнсене усă курна.

Анчах йĕпе отхода вутă вырăнне çынтăрни усала-ши? Литературăра катартна тăрăх, 60 процент нӳрлĕх, черелех тытакан одубина 1.350 калории парать. Çакан пек сахал калорине вутăна çынтăрни çителĕкле тăран вăй нумай пултарăймаст. Вал ака çак тĕслĕхрен те аван куранат: „Боль шевик" савăтран енергине пăс вăйĕ илсе тăракан комбинат хеллехи уйăхсенче çителĕклĕ пăс пулнă пирки йĕркелен ĕçлемест.

Техника йĕнчен те тата практикăра та çакна палăртна: одубина хакла йышши товар—картон тунăма çав тери паха чĕртăвар пулса тăрать.

Мелекессри екстракт савăтĕнче иккĕмĕш çул ĕнтĕ одубинăран картон тавакан цех ĕçлет. Пĕр тонна картон тума 2.153 тонна одубина кирлĕ. Çакна шута илсен „Боль шевик" савăтра, екстракт кăларна хыççăн йулна одубинăна уса курсан, çулталăкне 65—70 пин тонна картон туса каларма пулать. Çапла вара, одубинăран картон тăвакан пысăк хăпрак-лартма йурать. „Боль шевик" савăтри пăсп

Мире хӳтӗлессишӗн, Чехословаки никама пăхăнмасăр пурăнассине хӳтлессишӗн

Франци правительстви политикине хирӗç протеслекӗн йӳхăм пӗтӗм Франци çĕршывӗ тарăх анлăн саралса кайнă. Франци правительствин политики—Чехословакине хирӗç тăрас тĕлĕшне Англипе Франци килӗшӳ тăвасси патне илсе пынă.

Париж районĕнчи профсойуз активисĕсем пухăвĕ чĕнсе калани йышăннă. Унта сапла калана: „Чехословаки интересĕсене сутакан политикăпа робочисем нихăçан та килĕшес çук, ун пек политикă тĕнчери хăруша вăрçа сывхартăк çеç“, тенĕ.

Чĕнсе каланиште ĕçĕн Пĕтĕмĕшлĕ конфедерацийĕнчен тата профсойузсен пĕтĕм тĕнчери организацийĕсенчен Чехословакине хӳтлес тĕлĕшне тĕнчери пур çĕршывсенче те халех активлăн ĕçлеме тытăнма ыйтнă.

Чемберлен политикине хирӗç протеслекен йӳхăм пĕтĕм Англи çĕршывĕ тарăх саралса кайнă. Пĕтĕм Англи тарăх митингсем пулса иртеççĕ. Профсойузсен чылай организацийĕсем Чемберлен политикине хирӗç протеслекен резолюцисем йышăннă.

Хăçатсем Чемберлен капитуляцийĕ тунине хирӗç протеслесе сырнă çырусене вулакансенчен пит нумай илеççĕ. „Ньюс кроникл“ хăçат вулакансен çыравĕсене пичетлесе кăларнă. Вулакансем çак ыйтусене хирӗç отпет пама ыйтаççĕ: пĕрремĕшĕнчен, Англи правительстви мĕншĕн-ха ССР Сойузĕпе калаçса пăхман, иккĕмĕшĕнчен, мĕншĕн-ха Чемберлен парламентпа килĕшмесĕрех çавăн пек утăмсем тума йышăннă?

Англипе Франципи Чехословакине татса вылямалли империализла планĕ пирки Скандинави çĕршывĕсенчи халăхсене те хыттăн тарăхтарса йăнă. Çав çĕршывсенчи общественнăй шухăш Лондăнри планра пичĕк çĕршывсен никама пăхăнмасăр пурăнассине ăнăçлă тăнине кураç.

„Тĕвĕчри лару-тăру политикин чыслăхĕпе тивĕçлĕхешĕн хаçăн вăхăтра Совет Сойузĕ кăна çирĕплă тараç,—тесе çыраç Швецин „Гетеборгс Хандельстиднингс“ хаçачĕ.

(ТАСС).

— О ◆ О —

Агитсамолёт

Çĕнтăбĕрĕн 15-мĕшĕнче Горький йăчĕпе тăракан агитескадрильйĕн икĕ моторлă „Крокодил“ йăтлă самолёт Мускавран Совет Сойузĕнчи çĕнĕ стройкăсем тăрăх агитацилĕ пысăк рейса тухса кайнă. Самолёт Орск, Магнитогорск, Уфа, Челябинск тата ытти хулăсене те кĕрсе тухăç. Маршрут тăршшĕ—15 пин километр. Агитрейсăн задачĕ—çĕнĕ стройкăра ĕçлекенсене Мускаври стахановăвĕçсен опычĕсене парасси пулать.

Китайри вăрçă

ÝКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китай çарĕн боецĕсем оборонăра.

(Совуфото).

Столицă урамĕсенче

Мускав урамĕсенче чупакан вуншар пин автомобилсем, автобуссем таксисем, троллейбуссем, трамвайсем кĕрлĕ çутăлă светофорсем патĕнче секундлăха чăранса тăраççĕ.

Свердлăв площăтĕнчен—столица варринчен—машинăсем 15 йĕнеле кайăççĕ. Светофорсĕн çутисем пĕр пек чертелленсе çутăласçĕ. Пурте хăйĕн йĕркипе пыраç. Ака ĕнтĕ площăтĕ çиревĕ улани пырса кĕрет. Пушарпа кĕрешекен автомобилсем хăвăртăн пыраççĕ. Вĕсене ваљăн пур çĕртĕ те çул уçса парать. Çул кăтартса паракан милиционер хăтĕр тăрать. Çиревĕ сассине илтсенех вăл пушарпа кĕрешекен машинăсене хăвăрт çул уçса парать, кĕрле автомобилсем, ытти машинăсем çурессине чарса тăмасăр, площăтрен хăвăрт вырсе кайаççĕ.

Столицăн урамĕсемпе площăтĕсенче светофорсен симĕс, сарă, кĕрлĕ çуттисем талăкпех çутăласçутăлса тăраççĕ.

Мускавра площăтĕсемпе урлă урамсем çĕр те ситмĕл саккăр,—унта транспăрт çурессине çутăлсемпе йĕркелеççĕ. Светофорсем пĕрисем—автоматлă, тепиресем—алăпа ĕçлеттермелисем. Алăпа ĕçлеттермелисем нумайăх йăлман—пĕр виççĕмĕш пайран та сахал. Вĕсене урамра çурессине йĕркелекен пайри милиционерсем ĕçлеттерсе тăраççĕ. Калăпăр, Земљаной вăлри йĕ Смоленски площăтри светофор Петровкăри автоматлă тĕп станци провочĕне çыхăннине пит сахал çынсем пĕлеççĕ.

Станцире релесем татти-сыпписĕр сикасе тăраççĕ. Йăланах, реле хăйĕн вырăнне улăштарсан, электричествă токĕ 1—2 километр инçетре ăçта та пулин светофорта çутăна улăштарать.

Мускав урамĕсемпе площăтĕсем транспăртпа мĕн чухлĕ тулнине, автомобилсем мĕн чухлĕ иртнине çырса пынинчен те курма пулать. Театрăллăй пройезд тарăх икĕ йĕнеле пĕр сехетре 1900 автомобиль таран, Кирăк урамĕ тарăх—1200 автомобиль, Охотнăй ретпе—1800 автомобиль т. ыт. те иртсе кайаççĕ.

Хула транспăрчĕ çурессине светофорсемпех йĕркелесе тăма та пулĕччĕ. Анчах вăл машинсем хушшине час-часах пожарнăй, санитарнăй, аварийнăй тата ытти машинăсем те кĕреççĕ. Вĕсене хăвăрт ирттерсе ямала. Çавăнпа та урамсем хĕреслĕ çăкăнан вырăнсенче тата площăтсенче,—унта машинсем тата нумайăх чупаççĕ,—машинсем çурессине икĕ майпа йĕркелеççĕ. Унта постсенче милиционерсем—регулăтăрсем тăраççĕ, вĕсем кирлĕ вăхăтра машинсем çурессине йĕркелессине хăйсем çине илсе, урамсенче машинсем чыхланнине хăвăрт пĕтереççĕ.

Халăх ăи нумай çурĕнĕ сехетсенче столицăн тĕп магистралĕсенчи тротуарсем çуран çурĕкенсемпе тулса лараççĕ. Петровкă урамĕнчи пек урамра икĕ йĕнеле пĕр сехет хушшинче 30 пине йăхăн çын иртсе кайать. Çакăн пек нумай халăх виçĕ метрлă тротуарсенче вырнаçаймасть. Петровкăра çуран çынсем ваљăн асфальт тăрăх урамăн тротуар йĕнчи пайне шурă йĕрпе палла туса тухмала пулать. Çакăн пек тунипе машинсем çуремели çул тата ансăрланнă. Петровкăра машинсем çуресси çуллен çул ĕçет. Йăлашки сведĕнисем тăрăх, пĕр сехет хушшинче пин машини ытла, вуншар троллейбуссемпе автобуссем иртеççĕ. Петровкă урамĕнчи тата Кузнецки кĕперти урам урлăшенче кашни тăватă кĕтесрех светофорсем лартма тивнĕ.

Столицă урамĕсенче халăх çурени çуллен çул ĕссе пыраç. Аваристемпе ăнсăртран пулнă сийенсем урамсенче чаксах пыраççĕ. Ку вăл çуреве йĕркелессине лайăхлатнинчен килнĕ.

Халĕ Мускавра светофорсене ĕçлеттермели çĕнĕ автомат станцине туса çитереççĕ. Ку станци ĕçе тытăнсан мĕн пур светофорсене автоматсемпе ĕçлеттереççĕ. Çав вăхăтрах светофорсене те нумайлатаççĕ.

(ТАСС).

Призывниксен Хĕрлĕ Çара кайас кăмăлĕ пысăк

СĔНТĔРВĂРРИ. Кунта призыв пункчĕ хула театрне вырнаçнă. Ку çурт тăтăнах илĕртсе лараç. Шалта призывниксем ваљăлăшкă-шахмăт, çаçат-журнал вулама ӳкрам пӳлĕм хатĕрленĕ. Призывниксем хаçат-журналсем вулаççĕ, биллиардла та выљаççĕ. Унтах буфет, киоск пур. Призыв çĕнтăбĕрĕн 18-мĕшĕнче пуçланчĕ. Малтан комиссине тăваттăн кĕчĕç Вĕсенчен пĕри Прокопйĕв. Врачсем сывлăха тĕрĕслерĕç. Комисси председателĕ; есĕр Хĕрлĕ Çар ретне йăрăхлă,—терĕ. Прокопйĕв комисси председателĕне тав турĕ.

Оборона Халăх Комиссарĕ приказ кăларсанах, Прокопйĕв призыв кунне хатĕрленме тытăнчĕ. Хăйĕн ĕçĕсене туса çитерчĕ. Пĕлӳлĕхе ӳстерес тĕлĕшпе те нумай ĕçлерĕ.

— Хĕрлĕ Çар ретне йăрăхлă пуласчĕ. Куç шăрçине сыхланă пек сыхлăттăм тăван çĕршыв чикисене,—тенĕ вăл. Чăнах та, ун ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ. Халĕ вăл кавалерис-пограничник пулать.

Ака Алексей Стаховерăв. Вăл судоверфра ĕçлет. Унăн пиччĕшĕ, Александр, пĕлтĕр çара кайнă. Килте ватă амăшĕ тата икĕ йăмăкĕ.

— Кирлĕ мар мана ăготă. Ĕпĕ ăготăшăн ӳссе çитĕнмен—тăван çĕршывăн усăлă çын пулассăн. Тăшмана хирĕç тăма, ăна çапса çемĕрме епĕ хатĕр,—тет Алексей. Ана комиссри председателĕ Хĕрлĕ Çара йăрăхлă тесе пĕлтерчĕ.

Призывниксен Хĕрлĕ Çара кайас кăмăлĕ пысăк. Ака, призывник Иван Кунцов мĕн калать:

— Нумай пуласçĕ пурнăçра телейлĕ кунсем. Анчах ĕп пайăнхи пек телейлĕ кун курман. Ĕпĕ тăван çĕршыва сыхлама йăрăхлă пултăм.

Пирĕн çине урăх йăтăсем-тăшмансем тапăнсан, епĕр вĕсене йăстан тапăннă, çавăнтах çапса лучăркама хатĕр. Тăван çĕршывшăн епĕ хамăн пурнăçа та шеллеместĕн,—тет вăл. Ванă Кунцов—Анат Кушамарти „Комсомолец“ колхоз членĕ. Мĕн пĕчĕкренех тăлăх ӳснĕ. 1932 çултанпа комсомолец.

К. Симаков.

Каçхи вăтам шкул

КАНАШ. Каçхи вăтам шкулта вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ. Робочисемпе служăщисем производствăран уйăрăлмасăрах вăтам пĕлӳ илеççĕ. 5, 6, 7, 8 тата 9-мĕш классенче пĕтĕмпе 150 çын вĕренет. Пурнăчен ытла 8-мĕш класра нумай вĕренеççĕ, унта 44 çын.

Вĕренекенсем хушшинче отличниксем те чылай. Ленинла-Сталинла комсомол ХХ çул тултаракан йӳбилейне хатĕрленсе, шкулта „отличнăй“ паллăпа вĕренеçсишĕн социализмăлă йăрту сарăлса пырать.

Ив. Федăрăв.

Иккĕмĕш грузовик

ÇĔРПӲ. Кашаркассинчи „Пионер“ колхоз çак кунсенче иккĕмĕш грузовик туйанчĕ. Автомашина колхоза пысăк тупăш парать. Çапла, сăмахран, 1934 çулта илнĕ грузовик колхоза 1935 çулта 2.300 тенкĕ, 1936 çулта 4.500 тенкĕ, кăсал 8 уйăх хушшинче 5.200 тенкĕ тупăш панĕ.

А. Иванов,
В. Дмитрийĕв.

Отпуск панĕç

ШĂХАСАН. Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставне пурнăçа кĕртсе, Шуркассинчи Ворошилăв йăчĕпе тăракан колхозра Йăвăр çын пулнă 9 колхозницăна иккĕшер уйăх отпуск панĕç. Çавăн пек отпуск памалли колхозницăсем татах 8 çын пур.

Д. Артемйĕв.

Ответлă редактăр
Н. М. СЕМЕНĂВ.

Чăвашсойузӑн тĕп кантурне Шупашкарта ĕçлеме

аслă бухгалтĕр, икĕ бухгалтĕр тата машинистка кирлĕ

Ĕç вăхăтĕнче çак аярĕсене ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, Театральная улица, дом № 7.

ЧĂВАШСОЙУЗ.

.6—1

Шупашкарти Хресчен суртне завхоз кирлĕ

Хватер Хресчен суртĕнчех параççĕ.

ЧĂВАШ АССР СЫВЛĂХА СЫХЛАВ ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔ

ХУЛ КАСАКАНСЕН

3 УЙĂХЛĂХ КУРСНЕ

организацилет.

Занятисем 1938 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнчен пуçланаççĕ.

Курса 4 çултан кайа мар вĕренинсене илеççĕ.

Курсантсене уйăхне хватер укçине пĕрле 90 тенкĕ стипенди параççĕ.

Заявленине Чăваш АССР Сывлăха Халăх Комиссариачĕн медицинăлă вĕренӳ пайне памалла.

3—1

Нефть илсе тăракан организацисене ПĔЛСЕ ТĂМА

Главнефтесбытăн Чăваш кантурĕ Чăваш АСС Республикинчи мĕн пур Халăх Комиссариачĕсенчен, учрежденисенчен тата организацисенчен Главнефтесбыт патнă контрольнăй цыфрăсене форминче 1939 çулта мĕн чухлĕ нефть кирлĕ çинчен заявкăсем тăратма ыйтать.

Халăх Комиссариачĕсен, центрти учрежденисен тата организацисен формăсене, таблицăсене тата контрольнăй цыфрăсене тумалли кăтартусене Главнефтесбытăн Чăваш кантурĕнчен, районри учрежденисемпе организацисен хăйсене нефть илме çирĕплетнĕ нефтебазăсенчен илмелле.

ЗАЙĂВКĂСЕНЕ: районри учрежденисемпе организацисем хăйсен нефтебазисене, Халăх Комиссариачĕсем тата центрти ытти учрежденисем сводкăлă формăна Главнефтесбытăн Чăваш кантурне 1938 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнех кайа мар çак аярĕпа тăратаççĕ. Г. Чебоксары, Чапаевский поселок, Пушкинская ул., д. № 23, Чувашское конторе Главнефтесбыта.

Главнефтесбытăн Чăваш республикинчи кантурĕ.

2—1

КУНТА РАЗЙЕС ПУЛАТ

Н. А. Некрасăв поетăн „Чукунçул“ йăтлă сăввине час-часах асăлат Толстов. Ку сăвва вăл пăхмасăр калама та пĕлет, хăй бригадинчи платниксене те сахал мар вулавса панă. Вулавă хыççăн вара хĕрлĕ калаçу пуçланать. Калаçăна баракри ытти робочисем те активлăн хутшăнаççĕ. Толстов калать:

— Çак сăвăра, пирĕн пĕтĕм ĕçлеканăн аслă поечĕ сыриă сăвăра—ĕлĕкхи, илхăнлă патша вăхăтĕнчи пуриăçăн тискерлĕхĕç куçиски çинчи пек уçăмлăн курăнать. Ку сăвăра поет патша йыттисен чĕн салăмачĕ айĕнче ĕçлевĕ хресченсен вăйăпне Мускавпа Петроград хушшинчи чукунçулне тунине, пуриăç çине чăн-чăн художник куçĕпе пăхса, пысăк мăстарлăхпа кăтартса панă. Кам-кам пулман ыйăл чукунçулне тунă çĕртре? Кам-кам асап курмаи-ши? Пулнă унта Российăн пур кĕтесĕнчи хресченсем те. Патша хăваласа пынă иккене. Чукунçулне чăсрах тата йӳнерех туса пĕтерес тесе рабочисене катăртăлă условисенче ĕçлеттерĕç. Йыхă пек хĕнеç. Рабочисем уйăхне виçшер тенкĕ илессишĕн йĕпе-сапа вăхăтĕнче те, хĕлеки шартлама сивесенче те кунĕн-çĕрĕн, каниç пелмесĕр ĕçленĕ. Çурма-çарамаслăн, выçлăн-тутăлăн ĕçлесе типне вĕсем. Чĕркуç тарăн лачакара анса урисем шыçăç, хăршавкă аллисем сурăнланă, чăтма çук йăвăр ĕçпе кăкрисем лучăркаççĕ. Пурăççăр кĕтесе пурнăç панă иккен. Нумайăшĕ хăйсен тупăка кĕрсе выртăç. Чукунçул тăршшине шпалсем мĕн чухлĕ—çавăн чухлĕ вилшăмисем выртса йӳлăç. Çав шăмăсем чукунçул тунă çĕртре ĕçлекен рабочисен вилшăмийĕсем пулнă.

Çав йӳлă патша мăшкăлне тӳсеймесĕр вăхăтсăр куç хупнă çынсемшĕн чĕрепен хуйăхра, çак хуйăха кăшт та пулин çăмăллатас кăмăлпа: Ан пăшăрхан ес йӳратнă çĕршывшăн,—тенĕ поет, хăйне итлекен Ваньăна йăлантарнă май:—Ĕçхăлăхĕ тӳснĕ пайтах.

Мĕн хушшине вăл тӳсĕ йăлтах...

Тӳсĕ йăлтах—вăл вара уçĕ аслă Ирĕк çулне те хăйĕн кăкрипе. Шел, çав аван вăхăтра пурнăмашкан.

Иксĕмĕре те май килмĕ пире.

Шел çав. Хăй чĕререн йӳратнă çĕршывра, социализмăн татăклăн çĕнтернĕ аслă çĕршывра „Чукунçул“ сăввăн аслă автăрне пуранма тĕл килмерĕ. Нумай ĕмĕр хушши хурлăх тӳссе пурăннă ĕçхăлăхĕ хăйĕн кăкрипе аслă ирĕклĕхĕн çутă çулне уçинне кура пултарайманăй вăл. Çапах çав çул уçăласа шаннă, поет хăйĕн халăхĕшен хĕвеллĕ кун килессе чĕререн ĕмĕтленсе тăнă.

— Халĕ пулсассăнччĕ пирĕнне Некрасăв!—тет Толстов.—Ана епĕр çĕнĕ чукунçул çинчен çырма ыйтăттăмăрччĕ. Сӳжетне те хамăрах каласа парăттăмăрччĕ. Вăл сӳжет—пирĕн кулленхи хавасăл пурнăç, пирĕн ĕçри хастарлăх, пирĕн çутă ĕмĕтсем, уçă кăмăлсем...

Ишлей патĕнче разйес тунă çĕрте ĕçлекен платниксен бригадирĕ пулса тăваттăмĕш уйăх ĕçлет ĕнтĕ Толстов. Вăл килнĕ чухне кунта хăйăрна витĕнсе пусарăнман шпалсем çинче тăсăлса выртакан редьсăсемсĕр пуçне урăх нимĕн те пулман. Пулас разйес умĕнчи палаткăна чи малтанах Толстов бригади карнă. Пĕр кун хушшинче çĕнĕ хăмасенчен питĕ те селĕм лавка туса хунă. Çĕнĕ лавкари çĕнĕ сутăç теперĕ кункиннех хăйĕн ĕçне пуçăнă. Рабочисем мĕнле продуктă кирлĕ—лавкара пурте пур, Толстов бригади — стахановлăбригада. Бригадă членĕсем пĕр уйăх ĕçленĕ хыççăнах пачах çĕнĕ тумтир тăхăннă.

Рабочисем йышăнĕ кунсеренех ӳснĕ. Каменщиксем пысăк çуртсен никĕсĕсене хывнă. Çуртсем ваљăн пура пурама йăваç çителĕксĕр пулнă. Плотниксен ĕçĕ вăхăтлăха чарăнмăç. Çапах пăрахса каймăн вĕсем. Çак, такам урлă килнĕ кĕтмен иккеркен-хăтăлма тĕрĕс май тупнă. Васкатнă. Начальниксене хыпалантарнă:

— Парăр пире материал! Вырттса янаслăмăр, ĕçлеме килнĕ епĕр кунта!

Часах Канашран таварлă пуйăс хашкаса çитнĕ. Çичĕ вакун çине кирлĕ материалсем тийесе килнĕ пулнă.

— Грузчиксем çук,—тенĕ техник.—Вакунсене пушатма кама хушмала-ха...

Пăшăрханчăк кăмăлпа калаçса тăракан техник çине платниксем пăхса тăнă-тăнă та, пĕр харăссăн лăхлатса кулса йăнă:

— Варя, пире ес камсем тесе шутлатăн?—тенĕ вĕсем.—Епĕр грузчиксем пулма вăтанса тăратпăр тетĕн-им? Ата. Ху та хамăрпа перлех ĕçлетĕн...

Мĕн калинă—çав пулнă. Умра хĕрӳ ĕç вĕресе тăнă вăхăтра платниксем нумай калаçса тăма йăратмаççĕ. Толстов бригадничи ултă çын тата пĕр техник 8 сехет хушши ĕçлесе 7 вакун çинчи материалсене пушатса пĕтернĕ. Теперĕ кунхиннех варя, тул çутăлнă-çутăланах, çĕнĕ çурт пурас ĕç пуçланнă.

Август уйăхĕ пĕтнĕ тĕле вунпĕр кĕтесле, сакăр пӳлĕмлĕ çурт пулса та тăнă. Халĕ ку çуртăн кăмăсене тăваççĕ, кантăксене çыртаççĕ. Ку çуртра—разйес начальникĕн тата аппаратри ытти работниксен хватерĕ пулать.

Çĕнтăбĕрĕн 1-мĕшĕнче Толстов бригади тата тепĕр çурт, пассажирсене тăмали çурт тума тытăнаç. Стахановла çирĕмкунăйăх пуçлансанах бригадă членĕсем хăйсем çине обязательствăсем илчĕç: çĕнтăбĕрĕн 20-мĕш тĕлне пураса пĕтермелех!

Мĕн калинă—çав сăмах калаппинех те хăвăрттăн пурнăçланнă. Çĕнтăбĕрĕн 16-мĕш тĕлне пурас ĕç пĕтнĕ. Тăрринне вытмалли çеç йӳлнă. Урăх çĕре, тата ответлăрах участкăна куçат бригадă. Халĕ вăл 11-мĕш километрта, чукунçул çинче ĕçлекенсем ваљăн çурт тунă çĕртре ĕçлет. Ку çурт çак çинтес вăхăтрах хатĕр пулмалла.

Толстов бригади кӳçса кайнă выраna халĕ çĕнĕ бригадă, стахановла çирĕмкунăйăх пуçлансан çеç организацилленнĕ платниксен бригади йышăннă Бригадăна Йелахăв старик, 35 çул хушши тĕрлĕ строительствăсенче ĕçленĕ мастăр, йĕртсе пырать. Пассажирсем тăмали çурт тăррине витсе тата унăн йш-чикĕне пĕтĕмĕшпех хатĕр туса çитерес ĕçе вăл октябрĕн 1-мĕш тĕлне пĕтерме сăмах панă.

— Пĕтеретпĕр!—тет Йелахăв.—Панă сăмаха пурнăçа кĕртетпĕр. Çак çирĕмкунăйăхра Толстов бригадине ăмăртса, вĕсенчен те мала тухассишĕн кĕрешетпĕр.

Канаш ĕнчен пуйăс çитрĕ. Вăл каллех тĕрлĕ материалсем тата çĕнĕрен рабочисем илсе килнĕ. Платниксем пуйăс çине ытлашшипех тинкерсе пăхса тăмарĕç. Умри ĕçе пăрахма кирлĕ мар. Пуйăсĕ вăл килĕ-ха малалла та. Кунсеренех, иртсе каймассеренех вăхăтлăха кунта вăл чарăнĕ. Кунта разйес пулать.

МИТТА ПЕТĔРĔ.

„Пăвăн Коммуни“ сыпăнăç канăç хаçатĕнтĕр уйăхăн 3 ç. 50 пус, 3 уйăхăн 7 ç. 50 ç., 9 уйăхăн 15 ç. çулталăкăн 30 тенкĕ. Подписка сыпăну пĕрлĕхĕсем, письмоносăсем ыйтăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашлавлита № 50

Гор. Чебоксары, типография № 1 заказ № 711, Ф. А. 04×94 п. л.